28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
АВГУСТ
19
ВЫРСАРНИКУН
160(6911) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе
Шупашкар хула комитечӗн,
ЧАССР Верховный Совечӗн
тата Шупашкар хула
Совечӗн хаҫачӗ

Верховный Главнокомандующин

ПРИКАЗӖ

1945 ҫулхи августӑн 19-мӗшӗ. *№ 51.* *Мускав хули.*

Совет халӑхӗ фашистла Германие хирӗҫ туса пынӑ Отечественнӑй Аслӑ Вӑрҫӑра пирӗн авиаци хӑйӗн Тӑван ҫӗршыв умӗнхи тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫа кӗртрӗ.

Пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн мухтавлӑ соколӗсем сывлӑшри хаяр ҫапӑҫусенче нимӗҫсен мухтанма юратнӑ авиацине аркатса тӑкрӗҫ, ҫапла вара Хӗрлӗ Ҫара ирӗклӗн ҫапӑҫма майсем туса пачӗҫ тата хамӑр ҫӗршывӑн халӑхне тӑшман сывлӑшран бомбӑсем пӑрахса сиенлессинчен хӑтарчӗҫ.

Пӗтӗм Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрле, вӗсем тӑшмана аркатса тӑкмаллах пыра-пыра ҫапрӗҫ, унӑн ҫыннисемпе техникине пӗтере-пӗтере тӑкрӗҫ. Пирӗн паттӑр авиаци пултаруллӑн ҫапӑҫнисем ҫӗр ҫинчи ҫарсене ӑнӑҫусем тума яланах пулӑшса пычӗҫ тата тӑшмана татӑклӑнах ҫапса аркатма пулӑшрӗҫ.

Хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче Совет летчикӗсем питӗ ҫирӗп те хаюллӑ пулнин, чӑн-чӑн паттӑрлӑхӑн примерӗсене сахал мар кӑтартса пачӗҫ. Вӗсем Отечественнӑй Аслӑ Вӑрҫӑн историне паха та чаплӑ страницӑсем нумай ҫырса хӑварчӗҫ.

Совет халӑхӗ, халӑх-ҫӗнтерӳҫӗ хӑйӗн летчикӗсен ҫапӑҫури чапӗпе тивӗҫлипех мухтанать.

Вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра рабочисен, работницӑсен, инженерсемпе служащисен ӗҫри пуҫарулӑхӗ, совет авиаци конструкторӗсем ҫӗнӗ те ҫӗнӗ самолетсем шухӑшласа кӑларни тата вӗсем талантлӑ пулни хамӑрӑн авиацие нумай пиншер питӗ паха боевой самолетсемпе хӗҫпӑшаллантарма май пачӗ. Ҫав самолетсем хӑйсен ҫунаттисем ҫинче тӑшман валли вилӗм ҫӗклесе пынӑ тата хамӑрӑн аслӑ Совет халӑхӗн вилӗмсӗр чапне ҫӗклесе пынӑ.

Юлташсем — летчиксем, штурмансем, сывлӑшри стрелоксем, радистсем, мотористсем тата вооруженецсем, механиксем, техниксемпе инженерсем, офицерсемпе генералсем! Авиаци промышленноҫӗнчи рабочисем, инженерсем, служащисем тата конструкторсем!

Сире Авиаци праздникӗн Кунӗ ячӗпе саламласа ырӑ сывлӑх сунатӑп!

Авиаци Кунне яланлӑха палӑртса хӑварас майпа тата хамӑрӑн мухтавлӑ авиаторсене чысласа,

ҪАПЛА ПРИКАЗ ПАРАТӐП:

Паян, августӑн 19-мӗшӗнче, 20 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн столицинче—**МУСКАВРА**, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, хамӑрӑн паттӑр авиаторсене **ТӐВАН ҪӖРШЫВ** ячӗпе салют памалла.

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Генералиссимусӗ

И. СТАЛИН.

ТЫРПУЛА ЛАЙӐХ СЫХЛАСА УСРАР, ТӖРӖС ШУТА ИЛЕР

Яланах тирпейлӗ, сисӗмлӗ пуласси, колхоз пурлӑхне ҫирӗп сыхласси—кашни колхозникпа колхозницӑн, кашни совет ҫыннин таса тивӗҫӗ.

Ялхуҫалӑх артель уставӗн 17-мӗшпе 18-мӗш пункчӗсем кашни колхоз членнех колхоз харпӑрлӑхне ҫирӗп сыхласа усрама, айӑпа кӗнисене пӗр хӗрхенмесӗр ответ тыттарма хушаҫҫӗ. «Колхозӑн обществӑллӑ тата государство харпӑрлӑхне тӗрлӗ майпа вӑрласа ҫаратнине, артелӗн пурлӑхӗпе выльӑх-чӗрлӗхне тата МТС машинисене сӑтӑр тунине—колхозӑн пӗтӗм ӗҫне тӑшманла сӑтӑр туни вырӑнне, халӑх тӑшманӗсене пулӑшни вырӑнне хураҫҫӗ», тенӗ ялхуҫалӑх артель уставӗн 18-мӗш пунктӗнче. Колхоз йӗркин никӗсне сиен тӑвакана совет государствин хаяр законӗсемпе айӑпласа суд урлӑ ответ тыттармалла.

Ҫӗрӗҫ органӗсемпе колхоз руководителӗсем колхозӑн тырпулне, пурлӑхне лайӑх сыхласа усрассишӗн тӑрӑшмалла, колхоз тырпулне сыхлас ӗҫре ҫирӗп йӗрке туса хумалла. Анчах, ҫакӑн пек ҫирӗп йӗрке пулман пирки, хӑшпӗр колхозсенче колхоз пурлӑхӗпе ӗҫлемесӗр усӑ курма пӑхакансем те пур. Иртнӗ ҫул Первомайски районри Молотов ячӗпе тӑракан колхозра, Шӑхасан районӗнчи «Канаш» колхозра хиртенех 10—15 урапа ыраш ҫапса кайнӑ тӗслӗхсем те пулнӑ. Молотов ячӗпе тӑракан колхозӑн уйхирне кӑнтӑрла тата ҫӗрле пурӗ 11 ҫын хуралланӑ. Анчах та вӗсем ячӗшӗн кӑна пулнӑ. Колхоз правленийӗ тата Шурут ял Совечӗ хуралҫӑсем хӑйсене шанса панӑ ӗҫе мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслемен.

Ҫак тӗслӗхсем вӗсем хирти тырпула ҫирӗп сыхламалли ҫинчен, хуралҫӑсем шанчӑклӑ тата хушнӑ ӗҫшӗн ответ тытма пултаракан ҫынсем пулмалли ҫинчен калаҫҫӗ. Уйхирти тырпула тата колхоз кӗлетне хураллама тӗрӗсленнӗ, шанчӑклӑ ҫынсене уйӑрмалла. Уйрӑм колхозсенче вара ҫакна асра тытмаҫҫӗ. Акӑ, Ишлей районӗнчи «3-мӗш Интернационал» колхозра тырпул хураллама 16 ҫула та ҫитмен ачана, «Серп и Молот» колхозра вара 74 ҫулхи ватӑ колхозника уйӑрнӑ. Колхоз уйхирне тата кӗлечӗсене сыхлама ҫитӗнсе ҫитнӗ вӑйпитти ҫынсене ҫирӗплетмелле.

Тырпула вут-кӑвартан, выльӑх-чӗрлӗхрен сыхламалла. Колхоз председателӗсен ҫакна та асра тытмалла: авӑн ҫапмалли итемсемпе канансем ял ҫывӑхӗнчен аяккарах, тӗрлӗ суртйӗртен 150 метр инҫетре, ҫӳрекен ҫулсенчен 35—50 метр аякра пулмалла. Итем таврра пӗр метр сарлакӗш сухаласа ҫаврӑпмалла. Итем ҫывӑхӗнче тӗрлӗ ҫунтармалли япаласем тытма юрамасть. Склад хуралҫисемпе кладовщиксен кӗлет ҫывӑхне тӗрлӗ ҫӳп-ҫапран тасатмалла. Итем ҫывӑхӗнче тата складсем патӗнче шыв тултарнӑ чансем, юсавлӑ насус тата пушара хирӗҫ кӗрешмелли ытти инвентарьсем пулмалла.

Тырпула пухса кӗнӗ чухне колхозсенчи шут ӗҫне лайӑх йӗркелени калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнать. Тырпула ҫапнӑ хыҫҫӑн обязательнӑй йӗркепе виҫсе кӗртессине йӗркелемелле. Тырӑ тултарнӑ кашни миххе, тырӑ тиенӗ кашни лава тӗрӗс шута илмесӗр итемрен е складран кӑларса ямалла мар. Тарасасене, виҫесене колхоз председателӗ, ревизи комисси председателӗ тата кладовщик умӗнче тӗрӗслемелле, вӑл кӑна та мар, тӗрӗслеттернӗ виҫепе кӑна тырра склада йышӑнмалла тата складран кӑларса ямалла. Ҫак пуриншӗн те паллӑ йӗркене пӑхӑнманни уйрӑм колхозсенче пысӑк ҫитменлӗхсем патне илсе пырать. Тӳррипе каласан, колхоз тырпулне вӑрлама май парать.

Кашни колхоз руководителӗн ҫакна ӑнланмалла: колхоз складӗнче тырӑ тухманни е ытлашши тухни колхозра учет ӗҫне кирлӗ пек лартманнине, ҫавпа пула колхоз тырри саланнине пӗлтерет. Тырӑ ытлашши тухнӑшӑн та, ҫавӑн пекех тырӑ тухманнишӗн те кладовщик айӑплӑ, уншӑн вӑл ответ тытмалла.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «1945 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленире совет парти тата ҫӗрӗҫ органӗсене, МТС-семпе колхозсене тата совхозсене тырпула тӑкакланине хирӗҫ кӗрешме, тырпула уйхирте вырнӑ чухне, ҫапнӑ чухне, турттарнӑ чухне тата усранӑ чухне ҫирӗп хураллаcа сыхлассине организацилеме хушрӗҫ. Уйхирти тырра, вырса хунӑ тата капана хывнӑ тырпула, ҫавӑн пекех итемсем ҫинчи тырпула тӗплӗн хураллас ӗҫе организацилемелле, тырра итемсенчен амбарсене тата хатӗрлев пункчӗсене леҫнӗ чухне тырӑ турттаракан ҫыннӑн хушаматне, вӑл мӗн чухлӗ тырӑ тиенине, тырӑ мӗнле сортлине тӗрӗс кӑтартса ҫырнӑ накладнойсемпе ӑсатмалла.

Колхозӑн обществӑллӑ пурлӑхне никам та тӗкӗнме пултараймасть. Колхозӑн тӗштыррине тата ытти продукцине ҫаратни—питех те пысӑк преступлени туни пулать. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ колхозсемпе совхозсен тыррине тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсене вӑрлакансене, ҫаратакансене хытӑ айӑплама, 1932 ҫулхи августӑн 7-мӗшӗнче «Обществӑллӑ (социализмлӑ) харпӑрлӑха сыхласси ҫинчен» кӑларнӑ закон тӑрӑх суд тӑвасси таранах айӑплама хушаҫҫӗ.

Ҫак кунсенче ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ «Чӑваш республикинчи колхозсемпе совхозсенче тырпул пухса кӗртнӗ тата государствӑна тырӑ панӑ чухне тырпула тӑкакланине хирӗҫ кӗрешмелли мероприятисем ҫинчен» ятарласа постановлени йышӑнчӗ. Ҫак постановленире ВКП(б) райкомӗсене, райисполкомсене, ҫӗрӗҫ органӗсен руководителӗсене тырпула вырнӑ тата ҫапнӑ чухне, кӗлетсенче усранӑ тата турттарнӑ чухне тӑкакланине пӗтерес тӗлӗшпе, тырпула вӑрланине е салатнине чарса лартас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнма хушрӗ. Выранти партипе совет тата комсомол организацийӗсен чи кирлӗ тивӗҫӗ—тырра вӑхӑтра пухса кӗртесси, тырра вырса ҫапнӑ чухне тата турттарнӑ чухне тӑкакланине е салатнине хирӗҫ—ҫӗршывӑн апат-ҫимӗҫ ресурсӗсене чакаракан, государствӑна, колхозсемпе колхозниксене пысӑк сиен кӳрекен ҫав киревсӗр ӗҫе хирӗҫ татӑклӑн кӗрешесси пулса тӑрать.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ постановленине кашни колхозник тата колхозница патне ҫитермелле, лайӑх ҫитӗннӗ тырпула пӗтӗмпех колхоз кӗлетне пухса кӗртес тата ӑна куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек сыхлас ӗҫе колхозниксен анлӑ массине мобилизацилемелле.

Тырӑ—пирӗн пуянлӑх, пирӗн колхозсен вӑй-хӑвачӗн ҫӑлкуҫӗ. Тырпула тӗрӗс шута илер, ӑна сыхласа усрассине лайӑх организацилер!

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Чӑваш АССР-ӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсене, ялхуҫалӑх, промышленность, культура тата искусство работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Малалли. Пуҫламӑшӗ «Чӑваш Коммунин» 157-мӗш номерӗнче.

ЧУРАЧӐК РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

1. Михаил Афанасьевич **Афанасьева** — «Красная Поварня» колхозри пахчаҫимӗҫ бригадин бригадирне.
2. Дарья Лукиничпа **Лукинана** — «Красный самолет» колхоз бригадирне.
3. Яков Львович **Львова**—Еншик Чуллӑ ял Совет исполкомӗн председательне.
4. Емельян Матвеевич **Матвеева**—«Вучах» колхоз бригадирне.
5. Ирина Михайловна **Михайловӑна** — «Совет» колхозри сысна пӑхакана.
6. Николай Михайлович **Михайлова** — «Большевик» колхоз бригадирне.
7. Анастасия Павловна **Павловӑна** — «Прожектор» колхоз бригадирне.
8. Михаил Федорович **Федорова**—«Молодая сила» колхозри сысна пӑхакана.
9. Павел Яковлевич **Яковлева**—Чурачӑк ял Совет исполкомӗн председательне.

ШӐМӐРША РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

1. Павыбудах Шайдулович **Губайдуллина**—МТС-ри трактор бригадин бригадирне.
2. Григорий Федорович **Давыдова**—«Новая деревня» колхоз председательне.
3. Трофим Андреевич **Казеева**—«Заря» колхозри фермӑсен заведующине.
4. Анастасия Марковна **Ларионовӑна** — МТС трактористкине.
5. Дарья Степановна **Матвеевӑна** — «Трпер» колхоз председательне.
6. Тимофей Павлович **Павлова**—райҫӗрӗҫ пайӗн старши зоотехникне.
7. Никифор Васильевич **Патова**—Чаткасри пуҫламӗш шкул учительне.
8. Николай Никифорович **Платонова** — Центрти статистика управленийӗн районри инспекторне.
9. Петр Алексеевич **Тихонова**—Сталин ячӗпе тӑракан колхозри сад ӑстине.
10. Федор Андреевич **Юманова** — МТС трактористне.

ШӐХАСАН РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

1. Корнид Иванович **Альфонсова** — МТС токарьне.
2. Иван Васильевич **Васильева**—«Красный партизан» колхоз председательне.
3. Алексей Егорович **Егорева**—Ҫӗньял колхозӑн клуб заведующине.
4. Илья Ермолаевич **Ермолаева**—Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри старши конюха.
5. Георгий Иванович **Зверева**—«Новая жизнь» колхоз председательне.
6. Иван Кириллович **Кириллова**—райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй зоотехникне.
7. Павел Осипович **Осипова**—«Победа» колхоз полеводне.
8. Афанасий Павлович **Павлева**—Упанарти вулав ҫурчӗн заведующине.
9. Аким Сергеевич **Сергеева** — МТС-ри трактор бригадин бригадирне.

ҪӖМӖРЛЕ РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

1. Сергей Тимофеевич **Адрова**—заводри комсомолецсемпе ҫамрӑк слесарьсен бригадин бригадирне.
2. Кирилл Филиппович **Анисимова** — заводри старши мастера.
3. Андрей Семенович **Байняшова**—заводри мастера.
4. Николай Сергеевич **Балашова** — заводри цех начальникӗн заместительне.
5. Константин Иванович **Ваторшина** — Турхан лесничествин объездчикне.
6. Клавдия Петровна **Великовӑна**—МТС трактористкине.
7. Лаврентий Васильевич **Долгова** — «Большевик» заводри электромонтера.
8. Дмитрий Владимирович **Желнова** — заводри столяра.
9. Петр Тимофеевич **Казанова**—заводри фрезеровщика.
10. Перасковья Александровна **Ковалевӑна**—ВКП(б) райкомӗн статистикӑпа пӗрлӗхлӗ партбилет пайӗн заведующине.
11. Яков Степанович **Кондратьева** — заводри столяра.
12. Сергей Ильич **Кулътина** — 1-мӗш номерлӗ ремесла училищинчи производство вӗрентӗвӗн мастерне.
13. Пелагея Васильевна **Манохинӑна**—инпошив мастерскойӗн мастерне.
14. Клавдия Яковлевна **Мартыновӑна**—заводри станочницӑна.
15. Александр Андреевич **Милорадовскиe**—заводри цех начальникне.
16. Вера Васильевна **Митрофановӑна**—заводри маляра.
17. Елена Дмитриевна **Овсянниковӑна**—Ҫӗмӗрлери механизациленӗ вӑрман пунктӗнчи инженера.
18. Николай Михайлович **Першина** — заводри планпа производство пайӗн начальникне.
19. Алексей Владимирович **Потанина**—ВКП(б) Центральный Комитечӗн заводри парторгне.
20. Николай Ксенофонтович **Сазонова**—заводри цех начальникӗн заместительне.
21. Семен Федорович **Саррена**—Турхан ял Совет исполкомӗн председательне.
22. Федор Степанович **Свишева**—ҫулӑн 4-мӗш дистанцийӗнчи старши ҫулйӗр мастерне.
23. Андрей Григорьевич **Хорякина** — заводри строгальщика.
24. Андрей Николаевич **Чиркова**—Ҫӗмӗрлери механизациленӗ вӑрман пунктӗнчи Сӑр автоҫулӗ ҫинче ӗҫлекен тракториста.
25. Петр Дмитриевич **Шапкина**—Кабановски вӑрман пункчӗн заведующине.
26. Яков Емельянович **Шаройкӑна** — завод директорне.
27. Борис Иванович **Шишкина**—Ҫӗмӗрлери ҫыхӑну кантурӗн начальникне.

(Малалли пулать).

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Выранти топливо промышленность предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн июль уйӑхӗнчи итогӗсем ҫинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗ, Выранти топливо промышленность предприятийӗсен июль уйӑхӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухса, ҫаксем мала тухнине палӑртнӑ:

Канаш вӑрманпромхозӗ (директорӗ Чернов юлташ, хула совет исполкомӗн председателӗ Кизилов юлташ) июль уйӑхӗнче вутӑ хатӗрлемелли плана касас енӗпе 312 процент, турттарас енӗпе 228 процент тултарнӑ. Канаш вӑрманпромхозне Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата 20 пин тенкӗ преми пама йышӑннӑ.

Ишлей вӑрманпромхозӗ (директорӗ Петропавловский юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Петров юлташ) иртнӗ уйӑхра вутӑ хатӗрлемелли плана 335 процент, торф хатӗрлемелли плана 122 процент тултарнӑ. Ишлей вӑрманпромхозне 15 пин тенкӗ преми памалла тунӑ.

Красноармейски вӑрманпромхозне (директорӗ Рахванов юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Осипов юлташ) тата **Сӗнтӗрвӑрри вӑрманпромхозне** (директорӗ Смирнов юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Маклашкин юлташ) 10-шар пин тенкӗ преми пама палӑртнӑ.

Шупашкар пристанӗн ӑмӑртури ӗҫӗсем

Кӑҫалхи шыв ҫулӗ уҫӑлнӑранпах Чикме пристанӗпе ӑмӑртса ӗҫлесе, Шупашкар пристань коллективӗ уйӑхран уйӑха ҫитӗнӳсем турӗ. Шыв ҫулӗ уҫӑлнӑ малтанхи май уйӑхӗн планне 140 процент тултарнӑ пулсан, июнь уйӑхӗнчи плана тоннаж енӗпе 175 процент, тонна-километр енӗпе 280 процент тултарнӑ. Ҫакӑн пек кӑтартусемпе пирӗн пристань Тури Атӑл пароходствин пристанӗсем хушшинче иккӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ тата 5000 тенкӗ преми илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Шупашкар пристанӗн ӗҫне ҫакӑн пек хаклани пире июль уйӑхӗнче татах та лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарчӗ. Июль уйӑхӗнче пирӗн работниксем кашниех ҫӗнӗ вӑйпа, ҫӗнӗ ҫӗкленӳпе ӗҫлерӗҫ. Ҫапла ӗҫленине пула, пристань июль уйӑхӗнчи плана тоннаж енӗпе икӗ хут ытла, тоннакилометр енӗпе 5 хута яхӑн ирттерсе тултарчӗ. Ҫавӑн пекех пассажирсене турттарас плана та ытлашшипех тултарнӑ.

Пирӗн пристаньри кашни работник ӑмӑртӑва хутшӑннӑ. Ӑмӑртура стахановецсемпе ударниксен йышӗ те ӳссех пырать. Май уйӑхӗн вӗҫӗнче 15 стахановец, 12 ударник пулнӑ пулсан, август уйӑхӗ тӗлне стахановецсен йышӗ хӗрӗхе, ударниксен йышӗ вунпилӗке ҫитрӗ. Япаласем сыхлакан камерӑра ӗҫлекенсем Смирнова, Фессан, Губанова юлташсем хӑйсен ӗҫне яланах лайӑх туса пыраҫҫӗ. Таварсем йышӑнса ӑсатакан Т. Пушков, К. Путилов тата участок начальникӗ Ю. Захарова юлташсем те хӑйсен ӗҫ нормисене икӗ хут ытла тултараҫҫӗ.

Куславккапа Ильинка хушшинче ҫӳрекен «Газовец» пароход коллективӗ те иртнӗ уйӑхра ӗҫ тухӑҫлӑхне чылай ӳстерчӗ. Ҫак пароход ҫинче ӗҫлекенсем июль уйӑхӗнче пассажирсем турттармалли плана 117 процент тултарчӗҫ. Шкиперсенчен А. Скрябин, С. Ляпин, Н. Семяхин тата Н. Федоров юлташсем кӑтартуллӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Мӗнпур Совет Союзӗпе аслӑ Ҫӗнтерӳ ячӗпе социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать. Ҫак ӑмӑртӑва пристаньре ӗҫлекенсем те хутшӑнчӗҫ. Вӗсем, хӑйсен пухӑвӗнче Днепропетровск бассейнӗнчи работниксен чӗнӗвне сӳтсе-явса, татӑклӑ обязательствӑсем илчӗҫ. Ҫак ҫулхи навигаци планне тавар турттарас тата тупӑш илес енӗпе октябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне тултарма, таварсемпе пассажирсене турттарас хака планпа пӑхнинчен 10 процент чухлӗ чакарма пулчӗҫ. Унсӑр пуҫне пирӗн коллектив электроэнергипе топливӑна перекетлес, работниксен техникӑллӑ пӗлӗвне ӳстерес тата хӗле хатӗрленес тӗлӗшпе те мӗн-мӗн тумаллине палӑртса хӑварчӗ.

Халӗ пирӗн работниксем ҫак обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫа кӗртессишӗн ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Пирӗн ӑмӑртури задача —Чикме пристанӗнчен пур енӗпе те мала тухасси пулать.

М. ИВАНОВ.

Пристаньри профком председателӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 18-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 18-мӗшӗнче Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи фронтӑн чылай участокӗсенче тӑшман пирӗн ҫарсене хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫнӑ-ха. Японин тыткӑна паракан ҫарӗсен хисепӗ кӑштах ӳснӗ.

ИНҪЕТРИ ХӖВЕЛТУХӐҪӖНЧИ 1-МӖШ ФРОНТ ҫарӗсем МУДАНЬЦЗЯН хулинчен хӗвеланаҫнелле тата ЦИНГУТ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланаҫнелле 30—40 километр малалла кайнӑ. Фронт ҫарӗсем умӗнче Японин 3-мӗш армийӗн чаҫӗсем хӗҫпӑшала пӑрахса тыткӑна паранма пуҫланӑ.

ИНҪЕТРИ ХӖВЕЛТУХӐҪӖНЧИ 2-МӖШ ФРОНТ ҫарӗсем ТАНЬЮАНЬ тата СУНЬУ хулисене туртса илнӗ. САХАЛИН утравӗ ҫинче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн КОТОН тата КИТОН ятлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене тытса илнӗ.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ ҫарӗсем ЧАНЛИН хулине туртса илнӗ. ХАЙЛАР районӗнче фронт ҫарӗсене японецсен тӗреклетнӗ районӗн малтантарах хупӑрласа илнӗ гарнизонӗ, 5 пин салтакпа офицертан тӑраканскер, Японин НОМУРА ятлӑ генерал-майорӗпе пӗрле, тыткӑна паранннӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

СОВИНФОРМБЮРО.

Лӑпкӑ океан ҫинчи летчик Михаил Янко тунӑ паттӑрла ӗҫ

Штурмовиксен ушкӑнӗпе пӗрле летчик Михаил Янко японецсен пӗр портри транспорчӗсене атакӑламалла пулнӑ. Ҫул ҫинче унӑн машинине Япони истребителӗсен ушкӑнӗ тапӑннӑ. Тӑшманӑн зенитнӑй артиллерийӗ те хаяррӑн пеме пуҫланӑ. Янко самолетне тӑшманӑн темиҫе снарячӗ ҫӗмӗрсе кӗнӗ чухне, летчик хӑйӗн бомбисене пӑрахса пӗтереймен пулнӑ-ха. Машинӑна ҫӑлма ҫуккине кура, летчик ӑна ҫирӗп алӑпа портри чи пысӑк ҫурт пулса тӑракан электростанци ҫинелле тытнӑ.

Янко самолечӗ электростанци ҫине ҫуламлӑ факел пек пырса ҫапӑннине юлташӗсем курнӑ. Ҫавӑнтах вӑйлӑн кисренсе сасӑ илтӗннӗ. Пӗлӗтелле вӑйлӑ ҫулӑм юпи кӗрлесе хӑпарнӑ.

Порта йышӑнса илсен, моряксем ҫунса кайнӑ самолетӑн юлашкийӗсене тата унтан инҫех те мар летчикӑн кӑмрӑкланнӑ виллине тупнӑ. Янко ҫумӗнчи комбинезонӑн кӑкӑр ҫинчи сулахай кӗсйинче юнланса пӗтнӗ комсомол билетне тата летчикӑн удостоверенине тупнӑ.

Гастелло пек паттӑрла ӗҫ туса, Михаил Янко хӑйӗн ятне ӗмӗр манмалла мар чапа кӑларчӗ. Моряксем герой ҫар чыслӑхӗпе чысласа пытарнӑ та, тӑшмана хаяррӑн тавӑрма тупа тунӑ. Летчикӑн тӑпри ҫине самолет винтне лартнӑ. Лӑпкӑ океан воинӗсем чаплӑ соколӑн—Михаил Янко комсомолецӑн ятне ӗмӗр-ӗмӗр асра тытӗҫ.

Капитан КУЛЬКОВ.

ЛӐПКӐ ОКЕАН ФЛОЧӖ, августӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ).

Япони тискерӗсем Калинин сержанта асаплантарса вӗлернӗ

Совет пехотинецӗсем, хӑвӑрттӑн пырса ҫапса, японецсен тӗреклетнӗ пунктне тытса илнӗ те унӑн гарнизонне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн воинсем ҫав тӗреклетнӗ пунктра японецсем тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ совет боецӗн виллине тупнӑ. Пирӗн юлташӑн ӳтпӗвӗ ҫинче хытӑ асаплантарнин йӗрӗсем юлнӑ. Ӑна ҫав тери каскаласа, тӑрмаласа пӗтернӗ пирки, вӑл камне тумтир юлашкийӗсенчен, алли ҫине ҫыхнӑ компасран ҫеҫ палласа илме май килнӗ. Вӑл Калинин сержант пулнӑ. Ӑна, амансан тӑнне ҫухатнӑскере, японецсем тыткӑна илнӗ пулнӑ.

Акӑ японецсен тискер ӗҫӗ ҫинчен каласа паракан официальнӑй документ:

«Эпир, аялта алӑ пуснӑ старши лейтенант Лавняев, медицина службин капитанӗ Соловей, старши сержант Курбацкий, кӗҫӗн сержант Атаманов тата красноармеец Чененя ку акта аяларахра кӑтартнӑ ҫак ӗҫ пирки ҫыратпӑр:

Кӗҫӗн Хунаган ялӗшӗн ҫапӑҫнӑ чухне йывӑр аманнӑ Дмитрий Тимофеевич Калинин сержант японецсен аллине тыткӑна лекнӗ. Японецсен тӗреклетнӗ пунктне аркатса тӑкнӑ хыҫҫӑн эпир совет воинӗн виллине тупрӑмӑр. Тумтир юлашкийӗсенчен тата сыхланса юлнӑ компасран вӑл Калинин юлташ пулнине пӗлтӗмӗр. Вӑл ҫав тери хӑрушӑ асапа тӳссе ирттернӗ. Калинин юлташӑн сылтӑм хулпуҫҫине йӗтес шӑмми ҫывӑхӗнчен пуля шӑтарса кайнӑ, сылтӑм урине чӗркуҫҫи таран татса пӑрахнӑ. Икӗ ури ҫинче те тӑрӑхла май тарӑн каснӑ йӗрсем пур. Сылтӑм аякӗ ҫинче, хул кӗреҫин аялти пайӗ тӗлӗнче, виҫкӗтеслӗх касса кӑларнӑ. Куҫӗсене шӗвӗр япалапа шӑтарнӑ, сӑмса ҫунаттисене тӑпӑлтарса илнӗ. Пуҫ капташки тирне йӗри-тавра ҫӗҫӗпе касса ҫавӑрнӑ та пуҫ тирне сӳсе илнӗ. Вилӗн аялти пайӗ ҫуннӑ. Ҫаксенчен пуринчен те акӑ мӗн курӑнать: Япони тискерӗсем совет воинне, вӑл аманнӑ пирки японецсен аллине лекнӗ хыҫҫӑн, асаплантарнӑ. Эпир тӗпчесе ҫакна палӑртрӑмӑр: Калинин сержант атакӑна кӗрсе кайнӑ чухне пуля тивнипе аманнӑ пирки вилмен, вӑл японецсем асаплантарнипе вилнӗ.

Эпир мӗнпур совет воинӗсене хамӑрӑн юлташа асаплантарса вӗлернӗшӗн Япони тискер кайӑкӗсене тавӑрма чӗнетпӗр!

Старши лейтенант ЛАВНЯЕВ.
Медицина службин капитанӗ СОЛОВЕЙ.
Старши сержант КУРБАЦКИЙ.
Кӗҫӗн сержант АТАМАНОВ.
Красноармеец ЧЕЧЕНЯ».

ИНҪЕТ-ХӖВЕЛТУХӐҪӖНЧИ 1-МӖШ ФРОНТ, августӑн 16-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ).

СЕРГЕЙ ЛАЗО ПАМЯТНИКНЕ УҪНИ

ВЛАДИВОСТОК, августӑн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта чаплӑн пухӑнса, халӑх геройӗ,—Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи партизансене ертсе пынӑ Сергей Лазо ячӗпе памятник уҫнӑ. Памятник уҫнӑ ҫӗрте пиншер ӗҫҫынни пулнӑ. Приморье крайисполкомӗн председателӗ Блощаненко юлташ сӑмах тухса каланӑ.

— Сергей Лазо ячӗ,—тенӗ вӑл,—Инҫетри Хӗвелтухӑҫ ӗҫҫыннисемшӗн ҫывӑх та хаклӑ. Граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче Лазо Приморьери ӗҫҫыннисене шурӑ гвардеецсемпе Япони интервенчӗсене хирӗҫ кӗрешӗве тухма пӗтӗҫтернӗ. Лазо ертсе пыракан партизансен отрячӗсем Япони захватчикӗсене ҫав тери хӑратса тӑнӑ. 1920 ҫулта японецсем Лазона унӑн паттӑр юлташӗсемпе пӗрле арестленӗ те, чӗрӗллех паровоз кӑмакине пӑрахса ҫунтарса янӑ.

Владивосток ӗҫҫыннийӗсем, Лӑпкӑ океан флочӗн офицерӗсемпе краснофлотецӗсем Лазо памятникӗ умӗнче Хӗвелтухӑҫӗнчи вӑрҫӑ вутне чӗртсе яракан Япони милитарисчӗсене вӗҫне ҫитиччен аркатса тӑкма тупа тунӑ. (ТАСС).

ТАСС хирӗҫлесе калани

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаҫатра Колумбия ятлӑ радио саракан компанин Лондонри корреспонденчӗ Мэрроу пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: союзниксен оккупаци ҫарӗсен верховнӑй командующийӗ пулма армии генералне Макартура уйӑрса лартнӑ пирки Молотовпа Америка посолӗ Гарриман пӗр-пӗрне хытӑ сӑмахсем каланӑ пулать. Совет Союзӗн официальнӑй ҫыннисем верховнӑй главнокомандующи Хӗрлӗ Ҫарӑн представителӗ пулмалла тесе шутланӑ пулать. Вашингтонран илнӗ инструкци тӑрӑх, Гарриман ку ыйту тӗлӗшӗпе килӗшу тума мар, Совет Союзӗ ыйтнине пӑхса тухма та кӑмӑл туман пулать. Вӑрӑма тӑсӑлнӑ хӗрӳллӗ тавлашу пӗтнӗ хыҫҫӑн тепӗр икӗ сехетрен Совет Союзӗ хӑйӗн ыйтӑвне каялла илнӗ те Японире верховнӑй командующи пулма американеца уйӑрса лартнипе килӗшнӗ пулать.

ТАСС аллинчи тӗрӗс сведенисем тӑрӑх, «Нью-Йорк геральд трибюн» хаҫат пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре нимӗнле чӑнлӑх та ҫук. Чӑннипе ӗҫ ҫапла пулса иртнӗ: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви хӑйӗн посолӗ Гарриман господин урлӑ августӑн 11-мӗшӗнче Совет Правительстви пӑхса тухмашкӑн Япони правительстви парӑнасси ҫинчен тунӑ заявлениe хирӗҫ Япони правительствине пама хатӗрленӗ хӑйӗн отвечӗн проектне тӑратнӑ. В. М. Молотов панӑ Совет Правительствин ответӗнче Совет Правительстви ҫав проектпа килӗшни ҫинчен каланӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех ҫав ответра Союзниксен Верховнӑй Главнокомандовани ячӗпе Японие парӑнтармалли условисене алӑ пусакан ҫыннӑн кандидатурине е кандидатурисене палӑртасси пирки союзлӑ державӑсен пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлма кирли ҫинчен каланӑ. В. М. Молотовпа Гарриман господин хӑйсем пӗр-пӗрин шухӑшӗсене каласа панӑ хыҫҫӑн, ҫапла калаҫса татӑлнӑ: Совет Союзӗпе Америка Правительствисем хушшинче Союзниксен Верховнӑй Главнокомандованин асӑннӑ представительне уйӑрса лартасси пирки уйрӑм калаҫу пулса иртмелле. Совет Правительстви Макартур генерал кандидатурине хирӗҫ нимӗн те каламан. Макартур генерала Совет Правительствипе калаҫса татӑлнӑ хыҫҫӑн уйӑрса лартнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, «Нью-Йорк геральд трибюн» хаҫат Совет Союзӗн официальнӑй ҫыннисем Верховнӑй Главнокомандующи Хӗрлӗ Ҫарӑн представителӗ пулмалла тесе шутлани ҫинчен пӗлтерни, Совет Правительстви Америка Правительстви умне ҫавӑн пек требовани лартнӑ тени шухӑшласа кӑларнӑ суя хыпар пулса тӑрать.

Коммунистсемпе комсомолецсем тырпул пухса кĕртес ĕçе пуçарса ертсе пыма тивĕçлĕ

Тырӑ вырнӑ çĕрте агитациллĕ-массӑллӑ ĕçе вӑйлатса пырар!

ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ АВГУСТӐН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН

СВОДКА

(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырӑ вырнӑ
Вӑрнар	42,0
Советски	37,9
Шӑмӑршӑ	32,2
Хĕрлĕ Чутай	32,2
Муркаш	31,1
Пӑрачкав	30,2
Етĕрне	28,7
Сĕрпӳ	28,5
Чкаловски	28,4
Элĕк	28,0
Чурачӑк	27,6
Красноармейски	27,5
Куславкка	27,4
Вӑрмар	27,1
Елчĕк	26,5
Сĕнтĕр	25,8
Çĕмĕрле	25,4
Шӑхасан	25,3
Калинино	25,2
Канаш	24,8
Комсомольски	23,2
Октябрьски	22,7
Сĕнтĕрвӑрри	22,6
Тӑвай	21,7
Шупашкар	20,8
Первомайски	20,8
Ишлей	19,7
Улатӑр	19,05
Йĕпреç	13,9
Кузакино	12,5

ЫРАШ ВЫРСА ПĔТЕРЧĔÇ

Шупашкар районĕнчи Шурка ял Советне кĕрекен «Победа» колхоз кĕске вӑхӑт хушшинчех ыраш вырса пĕтерчĕ. Силина тата Прокопьева ертсе пыракан бригадӑсем лайӑх ĕçлерĕç. Вĕсем ĕçе уйрӑм сдельщинӑпа организацилениие пула, колхозниксемпе колхозницӑсем кулленхи нормӑна тултарас тесе пĕр-пĕринпе ӑмӑртса ĕçлерĕç.

Ыраш вырма тухнӑ хыççӑн 5-мĕш кунне авӑн çапма тытӑнчĕç тата тепĕр кунне ыраш акма та пуçларĕç. Халĕ авӑн çапас тата ыраш акас ĕç хĕрӳллĕ пырать.

Л. ФЕДОРОВ.

Тӑрӑшакан учетчик

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалӑх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышӑннӑ постановленийĕ тĕплĕн пурнӑçа кĕртес ĕçре колхозри учетчик пĕчĕк мар вырӑн йышӑнать. Колхозниксен ĕçне тĕрĕс тата вӑхӑтра шута илсе пыни колхозниксене ĕçре хавхалантарать.

Эпир Калинино районĕнчи «Çĕнĕ ял» колхозӑн учетчикне А. Терентьева хӑйĕн ĕç сĕтелĕ умĕнче тĕл пултӑмӑр. Вӑл юлашки пилĕк кун хушшинче колхозниксем мĕн ĕçленине бригадирсем панӑ сводкӑсем тӑрӑх тĕрĕслесе ведомость çине çырать. Тĕплĕн, васкамасӑр, тимлĕн çырса хурать вӑл ĕçкунĕсене кĕнеке çине. Вара кашни пилĕк кунта пĕрре колхозниксене курӑнмалли вырӑна çырса çапать. Опытлӑ бригадирсем Хĕрлĕ Çар ретне кайнӑранпа ку колхозра ĕçкунĕсем çырса парассине пĕтĕмпех учетчик туса пынӑ.

Терентьева юлташ халĕ, колхозниксем хирте чухне, кашни бригада е звено вырнӑ лаптӑксене шута илсе, колхозниксене куллен пĕлтерсе тӑрать, социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑрах сарса яма пулӑшать.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Вӑрнар районĕ ыраш вырса пĕтернĕ

ВӐРНАР, августӑн 18-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем пурĕ 7382 гектар тырӑ вырнӑ. Августӑн 17-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем ыраш вырса пĕтерчĕç. Ыраш вырнӑ çĕрте пирĕн колхозсем жнейкӑсемпе анлӑн усӑ курчĕç, пурĕ 1880 гектар машинӑпа вырнӑ. Сталин ячĕпе тӑракан колхозра ырашӑн 60 процентне машинӑпа вырнӑ. Тырпул вырса кĕртес ĕçре кӑçал «Первое мая» тата Чапаев ячĕпе тӑракан колхозсем лайӑх ĕçлерĕç. Çак колхозсем ыраша августӑн 8-мĕшĕ тĕлнех вырса пĕтерчĕç. Чапаев ячĕпе тӑракан колхозра халĕ тулӑ, урпа, пӑрçа вырса пĕтернĕ, тата 2 кунран сĕлĕ вырса пĕтереççĕ. «Первое мая» колхоз çуртырисене 60 процент, «Победа» колхоз 50 процент ытла вырнӑ.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницӑсем тырӑ вырас ĕçре уяр çанталӑкӑн кашни сехечĕпе туллин усӑ курчĕç, кӑнтӑрла та çĕрле те ĕçлерĕç. Тырӑ вырас ĕçре уйрӑм сдельщинӑпа, уйрӑм участоксенче ĕçлени тата социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пыни, ĕç тухӑçлӑхне нумай хӑпартрĕ. «Первое мая» колхозра машинист пулса 17 çулхи М. Митрофанов юлташ ĕçлет. Вӑл хӑйĕн жнейкипе 30 гектар ытла ыраш вырнӑ, кашни кунах ĕç нормине 150 процентран кая мар тултарнӑ. Митрофанов юлташ кӑçал пĕр жнейкӑпа 85 гектартан кая мар вырма шутлать. Сталин ячĕпе тӑракан колхозра кашни кунах 7 жнейкӑпа 35—40 гектар ыраш вырнӑ.

Çурлапа выракансем те пысӑк тухӑçлӑхпа ĕçлеççĕ. «Первое мая» колхозри Нина Мутина кашни кунах 0,33 гектар вырать, Мария Яковлева 0,23—0,30 гектар вырать. «Ударник» колхозри Анастасия Ронзина, Дария Тихонова, Анна Бардасова, Евгения Ронзина юлташсем те кашни кунах 0,31—0,35 гектар выраççĕ.

Районри колхозсем 516 гектар тыррине çапнӑ, 533 гектар çинчи ыраша капана хывнӑ.

Халĕ пур колхозсенче те ыраш акаççĕ, авӑн çапаççĕ тата государствӑна тырӑ леçеççĕ.

Я. ПЕТРОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Колхоз августӑн 20-мĕшĕ тĕлне ыраш акса пĕтерет

ЧУРАЧӐК. Кĕçĕн Чуллӑри «Победа» колхоз колхозникĕсем пĕр-пĕринпе ӑмӑртса ĕçлеççĕ. Кашни колхозник, хӑйне уйӑрса панӑ участока хӑвӑртрах вырса пĕтерсе мала тухма тӑрӑшса, ĕçе хĕвел тухиччен тытӑнать. А. Егорова, Д. Петрова, К. Ефимова, У. Николаева тата ытти колхозницӑсем икшер норма тултараççĕ, кашни кунах вĕсем 0,20—0,23 гектар выраççĕ. Çĕмелсене те хӑйсемех тӑваççĕ. Кунне 2—3-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илеççĕ.

Колхозниксем вырнӑ участоксене бригадир, унтан колхоз председателĕ Федоров юлташ тĕрĕслесе йышӑнать. Бригадир кашни кун колхозниксем мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине çырса пырать тата колхозниксене пĕлтерсех тӑрать. Августӑн 14-мĕшĕнче колхозниксем кĕрхи тырӑсене пĕтĕмпех вырса пĕтерсе, урпа вырма тытӑнчĕç.

Колхозра халĕ авӑн çапаççĕ, ыраш акаççĕ, государствӑна тырӑ параççĕ. Вуншар гектар ыраш акнӑ, 15 гектар çурхи тырӑ вырнӑ. Колхоз августӑн 20-мĕшĕ тĕлне ыраш акса пĕтерет.

Пĕр çын та ĕççĕр лармасть кунта. Ватти-вĕтти мĕнĕпех тырӑ выраççĕ. Икĕ жнейка хыççӑн 30 çын кĕлте çыхса пыраççĕ. Тепĕр 3—4 кунтан колхоз çурхи тырӑсене те вырса пĕтерет, кĕлте кӳме тата машинӑпа авӑн çапма тытӑнать.

С. ШАДИН.

Капан тӑваççĕ

Шӑмӑршӑ районĕнчи 15 колхоз ыраш вырса пĕтернĕ. Ыраш вырас ĕçе район 40 процент ытла пурнӑçланӑ, вӑл шутран çуррине яхӑн жнейкӑсемпе вырнӑ. Колхозсенче кĕлтесене капана хывас ĕç те ӑнӑçлӑ пырать. Авӑн çапма тӳрех итеме турттарнисĕр пуçне 710 гектар çинчи кĕлтене капана хывнӑ. Халĕ пур колхозсем те ыраш акаççĕ, планпа пӑхнӑ тӑрӑх иртнĕ пилĕк кун хушшинче кунта 300 гектар ыраш акмалла пулнӑ, колхозсем 485 гектар акнӑ, вӑл шутран 200 гектар ытла машинӑпа акнӑ.

Заготзерно пунктĕнчи çитменлĕхсем

Шупашкарти Заготзерно пункчĕ Шупашкар, Сĕнтĕр, Ишлей, Муркаш, Сĕнтĕрвӑрри районĕсенчи колхозсенчен тырпул йышӑнать.

Хатĕрлев пункчĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, тырпул илме хатĕр.

Тырпул хумалли складсене, 2 складсӑр пуçне, пурне те юсаса çитернĕ тата дезинфекциленĕ. Лабораторинчи приборсем те пурте йĕркеллĕ. Тырпул тасатмалли машинӑсем юсавлӑ. Пурĕ 7 клейтон юсамалла пулсан, 4-шне юсанӑ, ыттисене çак кунсенчех юсаса çитереççĕ. Кунсӑр пуçне 2 триумфа, 1 триера, «Вим» текен машинӑсене те ырап-наянах юсаса пĕтереççĕ.

Хатĕрлев пунктĕнче партин пуçламĕш организацийĕ пур, унта пурĕ 8 коммунист. Парторганизаци хуçалӑхри пур ĕçсенче те активлӑн ĕçлет. Тырпул илме хатĕрленес ыйтӑва парторганизаци 2 хутчен сӳтсе явнӑ. Ку тĕлĕшпе кашни коммуниста порученисем парса тухнӑ.

Тырпул леçме пыраканссем валли хĕрлĕ кĕтес пулать. 35 экземпляр тĕрлĕ хаçат-журналсем çырӑнса илнĕ. Кунтах «Союзпечать» куçса çӳрекен библиотека уçса парать. Хатĕрлев пункчĕ умне репродуктор лартнӑ. Тырӑ лавĕсем тӑракан вырӑна лозунгсемпе илемлетеççĕ.

Колхозниксем валли столовӑй уçма уйрӑм çурт юсаса хатĕрленĕ, ĕçмелли шывсем сутакан 2 ларека юсаса лартнӑ.

Заготзерно пункчĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, тырпул йышӑнма хатĕрленсе çитнĕ пулсан та, унӑн ĕçĕнче пысӑк çитменлĕхсем пур-ха.

Хатĕрлев пунктĕнче ĕçлеме тата 3 кладовщик, грузчиксем нумай кирлĕ. 8-мĕшпе 4-мĕш складсен тӑррине витесси ытла та ерипен пулса пырать. Хатĕрлев пунктне пырса кĕмелли çул пылчӑклӑ. Анчах хула Совечĕ ку çула юсама тӑрӑшмасть. Вӑрлӑх типĕтмелли сушилка валли вутӑ турттарас ĕç те вӑраххӑн пулса пырать.

Тырпул леçме пыракан колхозниксем валли столовӑй çурчĕ хатĕр пулсан та, столовӑйсемпе ресторансен тресчĕ ӑна ĕçе ярас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Столовӑйра ĕçлекенсене тупса хатĕрлемен, савӑт-сапа тавраш çук. Çавна пула столовӑй халĕ те ĕçлеме тытӑнман. Чебторг директорĕ Швец юлташ тӑрӑшман пирки, юсаса хатĕрленĕ 2 ларек халĕ те пушах лараççĕ.

Вл. ПЕРМЕК.

ВАСКАТЬ ХУРÇӐ ПУЙӐС

Тӳп-тӳрĕ чугун çулĕ
Çип çапнӑ пек выртать.
Çĕмĕрттерсе ун тӑрӑх,
Ав, пуйӑсĕ пырать.

Сип-симĕс вӑрман витĕр
Вӑл тухрĕ сас парса,
Уй урлӑ каçса кайрĕ,
Шур тĕтĕм кӑларса.

Васкать кӑна васкать вӑл
Шупашкара çитме.
Ураписем кусаççĕ
Халь хатĕр пек вĕçме.

Илемлĕ лӑпкӑ пурнӑç,
Илемлĕ кунĕсем;
Пуйӑс пекех васкавлӑн
Чупаççĕ халь вĕсем.

Асапĕ те хĕн-хурĕ
Тек килес çук кунта.
Тӑшмансене тĕп турĕ
Çĕршывӑмçӑм йӑлтах.

Сахал-и çакӑ пуйӑс
Ăсатнӑ çынсене,
Вӑрçӑ хирне çитернĕ
Атакӑна кĕме.

Халь каялла килеççĕ
Çак пуйӑспах вĕсем.
Кӑкрисенче çиçеççĕ
Çап-çутӑ орденсем.

Аван-çке чугун çулĕ
Çип çапнӑ пек выртать.
Каçатпӑр Ункӑ урлӑ
Сисмесĕр, хӑвӑртах.

Аван-и Шупашкарĕ?
Аван-и тӑвансем?
Илемлĕ анлӑ Атӑл!
Илемлĕ хумĕсем!

Иван МАЛГАЙ.

Киле тавӑрӑннӑ паттӑр воинсене—пулӑшу

КӲКЕÇ. Аслӑрах çулхисене Çапӑçури Çартан киле ярасси çинчен йышӑннӑ закона пурнӑçласа, районри колхозсем киле тавӑрӑннӑ паттӑр воинсене 34,5 центнер тырӑ парса пулӑшнӑ. 7 воина çурт тӑррисем витсе панӑ. Пĕр воина хӑйĕн килти çуртйĕрĕсене юсама йывӑç турттарса панӑ. Киле тавӑрӑннӑ 69 воина пурне те ĕçе вырнаçтарнӑ. Вĕсенчен чылайĕшĕ колхозсенче бригадирсем пулса ĕçлеççĕ.

Çапӑçури Çартан паян-ыран тавӑрӑнакансене кĕтсе илме кашни колхозрах дежурнӑй лашасем пур.

Çулйĕр строительствинче лайӑх ĕçлекен район

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Район çулйĕр строительствинче çулсерен пысӑк çитĕнӳсем тӑвать. Иртнĕ çулта çулйĕр строительствин планне 250 процент тултарнӑччĕ. Çапла район Чӑваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Çулйĕр управленийĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Районри ĕççыннисем çак Хĕрлĕ Ялава кӑçал та хӑйсен аллинчех хӑварассишĕн кĕрешеççĕ. Район çулйĕр строительствин çулталӑкри планне августӑн 1-мĕшĕ тĕлне 306,2 процент тултарчĕ.

Иртнĕ 7 уйӑх хушшинче çĕнĕ кĕперсем 103 метр тӑршшĕ тунӑ. Шашка сарса 2 километр тӑршшĕ, хӑйӑр сарса 5 километр тӑршшĕ шоссе çулĕсем тунӑ. Çавӑн пекех кивĕ кĕперсемпе çулсене те чылай юсанӑ, çулсем хĕррине йывӑççем лартса тухнӑ.

Кунсӑр пуçне район центрĕнче хӑма сарса 800 метр тӑршшĕ тротуар тунӑ, учрежденисем умне карта тытса тухнӑ.

В. АНДРЕЕВ.

Ченолт генерал-майор калани

НЬЮ-ЙОРК, августӑн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатӑн корреспонденчĕ панӑ хыпар тӑрӑх, Америкӑн Китайри сывлӑш-çар вӑйĕсен командующийĕ пулнӑ Ченолт генерал-майор корреспондентпа калаçнӑ чухне çапла каланӑ: Совет Союзĕ Японие хирĕç вӑрçа тухни Лӑпкӑ Океан çинчи вӑрçа хӑвӑртрах пĕтерме май паракан ĕç пулса тӑчĕ. Эпир атом бомбисемпе усӑ курман пулсан та, Совет Союзĕ хутшӑннӑ хыççӑн вӑрçӑ часах пĕтнĕ пулĕччĕ. Хĕрлĕ Çар Японие хӑвӑрт пырса çапни Японин çĕршывне йĕри-таврах çавӑрса илессине вĕçлерĕ, çавна пула ĕнтĕ Японин чĕркуççи çине тӑма лекрĕ.

ЯПОНИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

ЛОНДОН, августӑн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Нью-Йоркри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тӑрӑх, Японин çĕнĕ премьер-министрĕ Хигасикуни принц çĕнĕ правительство туса çитернĕ. Правительствӑри пур министрсем те, çар министрĕпе тинĕс министрĕсĕр пуçне, граждӑнла çынсем.

Çĕнĕ правительствӑна çаксем кĕнĕ: премьер-министр тата вӑлах çар министрĕ—принц генерал Хигасикуни, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Мамору Сигемицу, тинĕс министрĕ адмирал Мицумаса Ионаи, транспорт министрĕ — Наото Кохияма, шалти ĕçсен министрĕ—Ивао Ямадзаки, финанс министрĕ—Зюици Цусима, сутĕç министрĕ, вӑлах сывлӑх министрĕ—Кендзо Мацумура, çĕрĕçпе суту-илӳ министрĕ — Котаро Сенгопу, вооружени министрĕ — Цикухэй Накадзима, юстици министрĕ — Цудзо Ивата, кабинетӑн генеральнӑй секретарĕ—Такеторо Огата, законсем хатĕрлекен бюровӑн директорĕ—Наокан Мурасо.

Çĕнĕ правительствӑра «Аслӑ Хĕвелтухӑç Ази ĕçĕсен» министрĕ те пур, вӑл министрӑн ĕçĕсене ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сигемицу туса пымалла.

К. Е. ВОРОШИЛОВ БУДАПЕШТА ТАВРӐННИ

БУДАПЕШТ, августӑн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Августӑн 14-мĕшĕнче Союзниксен Венгрири Контроль Комиссийĕн Председателĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Климент Ефремович Ворошилов тата политика советникĕ Пушкин юлташ Мускавран Будапешта таврӑннӑ.

ДЕ ГОЛЛЬ ВАШИНГТОНА КАЯССИ

ВАШИНГТОН, августӑн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Августӑн 14-мĕшĕнче Шурӑ Çурт хаçатсенче пичетлесе кӑларма çакӑн пек пĕлтерӳ панӑ:

«Кӑçалхи май уйӑхĕнче Америкӑри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕпе Франци Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ Бидо пĕр-пĕринпе калаçнӑ. Калаçура Трумэн президентпа де Голль генерал пĕр-пĕринпе тĕл пулма шухӑшлани палӑрнӑ. Вара çапла йышӑннӑ: де Голль Пĕрлешӳллĕ Штатсене май килсенех пымалла. Çав тĕлпулу çак уйӑхра пулса иртмелле, де Голль генерал Вашингтона пымалли кун—августӑн 22-мĕшĕ пулмалла тесе йышӑннӑ».

ДЕ ГОЛЛЬ ПЕТЭНА ВĔЛЕРМЕЛЛИ ПРИГОВОРА ĔМĔРЛĔХЕ ТĔРМЕНЕ ХУПМАЛЛА ТУНИПЕ УЛӐШТАРНӐ

ПАРИЖ, августӑн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви панӑ хыпар тӑрӑх, Францин юстици министерстви паян пĕлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ. Унта çапла каланӑ:

«1945 çулхи августӑн 15-мĕшĕнче Верховнӑй суд Филипп Петэна вĕлермелле, унӑн граждӑнла прависене тата пурлӑхне туртса илмелле туса приговор йышӑннӑ. Верховнӑй суд çакӑнпа пĕрлех çапла сĕнӳ панӑ: судпа айӑпланӑ Петэн питĕ ватӑлса çитнине кура, ӑна вĕлермелле тунӑ приговора пурнӑçа кĕртмесĕр хӑварсан та юрать, тенĕ. Францин Вӑхӑтлӑх Правительствин пуçлӑхĕ де Голль генерал, 1945 çулхи августӑн 17-мĕшĕнче кӑларнӑ декрет тӑрӑх, Филипп Петэна вĕлермелле тунӑ приговора ĕмĕрлĕхех тĕрмене хупмалла тунипе улӑштарнӑ».

МИХАЙЛОВИЧ БАНДИНЧИ ÇИЧĔ ПУÇЛӐХА ВĔЛЕРНĔ

БЕЛГРАД, августӑн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио çапла пĕлтерет: августӑн 14-мĕшĕнче кӑнтӑрла иртсен, суд йышӑннӑ приговор тӑрӑх, Михайлович бандинче пуçлӑхра тӑнӑ çичĕ [illegible] вĕлернĕ.

АВСТРИ ГИТЛЕРОВЕЦĔ ГРАБНЕР ТУНӐ ПРЕСТУПЛЕНИСЕМ

ЛОНДОН, августӑн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тӑрӑх, Вена хулинче нумаях пулмасть Освенцимри концентраци лагерĕнчи политика тĕлĕшпе хупнӑ çынсене допрос тӑвакан отделӑн руководителĕ пулса ĕçленĕ Австри гитлеровецне Эрнст Грабнера арестленĕ. Вӑл каласа панӑ тӑрӑх, виçĕ çул хушши «ĕçленĕ вӑхӑтра» унӑн айӑпĕпе Освенцим лагерĕнче 800 пин çынтан пуçласа пĕр миллион çынна çити пĕтнĕ. Грабнер персе пӑрахмалли тата çунтарса ямалли приказсем пани нацистсен аслӑ влаçĕсем хушнипе пулса пынӑ тесе «хӳтĕленме» хӑтланать.

АВСТРИРЕ ВӐРÇӐ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ СУД ТӐВАÇÇĔ

ВЕНА, августӑн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Венӑри халӑх судĕнче нацистла преступниксен пĕрремĕш процесĕ пуçланнӑ. Çав преступниксене Австри правительстви вӑрçӑ преступникĕсем çинчен нумаях пулмасть йышӑннӑ закон тӑрӑх суд аллине панӑ.

Суд умне 4 фашиста — нимĕç концлагерĕнчи çынсене йышлӑн вĕлерес ĕçе хутшӑннӑскерсене—Рудольф Кронбергера, Алоис Франка, Вильгельм Нейтейфеле тата Полиневскине тӑратнӑ. [illegible] тĕпчесе палӑртнӑ тӑрӑх, çав лагерьте 102 çынна тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ.

Суд процесне итлеме Америка, Англи тата Австри хаçачĕсен корреспонденчĕсем пынӑ. Халӑх сучĕн ирхи тата каçхи ларӑвĕсенче айӑпланакансенчен ыйтса пĕлнĕ.

ИРАНРИ РЕАКЦИОНЕРСЕМ ДЕМОКРАТИЛЛĔ ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ТАПӐНАÇÇĔ

ТЕГЕРАН, августӑн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Иранӑн тĕрлĕ хулисемпе районĕсенчен реакционерсем демократиллĕ организацисене бандитла тапӑнни çинчен калакан хыпарсем килеççĕ.

Тегеранри нумай хаçатсем пĕлтернĕ тӑрӑх, çак кунсенче Шираз хулинчен инçе мар ларакан Мардашт ялĕнче, Мозарен тӑванĕсем, Эстахри тата ытти реакционерсем хĕтĕртнипе, хулигансем халӑх партийĕн клубне тапӑннӑ, унти япаласене çаратса пĕтернĕ те юлашкинчен вут тĕртсе хӑварнӑ. Çавӑн пекех тата халӑх партийĕн членĕсен — Шарифи, Овранг, Салмани, Джахеди, Хайдари тата Баят ятлӑ çынсен хваттерĕсене те çаратса пĕтернĕ.

Йезда çывӑхĕнче вырнаçса ларакан Ардаканран çапла пĕлтереççĕ: унта хулигансем виççĕмĕш хут ĕнтĕ халӑх партийĕн комитечĕн вывескине тата-тата антарнӑ.

Августӑн 9-мĕшĕнче Шахи (Мазендеран) хулинче Сеид Зия-эд-Дин майлӑ тӑракансен 80 çынлӑ ушкӑнĕ, чукмарсемпе тата револьверсемпе хĕçпӑшалланса, пир-авӑр фабрикине çĕмĕрсе кĕме хӑтланнӑ. Вĕсем унта фабрикӑна аркатса тӑкса йĕркерен кӑларма шутланӑ.

Влаçсемпе полици, çавӑн пек ирсĕр ĕçе чарас вырӑнне, аякран кӑна пӑхса тӑнӑ. Пир-авӑр фабрикинчи рабочисем фабрикӑна хӑйсеннех хӳтĕлеме лекнĕ, вĕсем бандитсене хӑваласа кӑларса янӑ.

ПОЛЬША ПРАВИТЕЛЬСТВИ ТУСА ИРТТЕРЕКЕН МЕРОПРИЯТИСЕМ

ВАРШАВА, августӑн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Польшӑра тухакан хаçатсем пĕлтернĕ тӑрӑх, Министрсен Совечĕ августӑн 10-мĕшĕнче пулнӑ ларура Польша çарĕнчи салтаксен пĕр пайне киле ярасси çинчен закон йышӑннӑ. Çав закон тӑрӑх киле тавӑрӑнакан салтаксене пулӑшу пама палӑртса хунӑ.

Министрсен Совечĕ, Польша Халӑх Совечĕ сĕннĕ улӑштарусене кĕртсе, амнисти çинчен калакан закона пĕтĕмĕшпех çирĕплетнĕ. Çав сĕнӳсене амнистие ытларах сарас енĕпе панӑ. Кунсӑр пуçне çав ларура обязательнӑй йĕркепе физически воспитани парасси çинчен, çар ĕçне вĕрентсе хатĕрлесси çинчен тата тивĕçлĕ ведомствӑсем организацилесси çинчен закон йышӑннӑ.

Тĕнчери лару-тӑру

Совет Союзĕ Японие хирĕç вӑрçӑ пуçласа яни Инçетри Хĕвелтухӑçĕнчи событисене татӑклӑнах хӑвӑртлатрĕ, Япони агрессийĕн вӑрçӑ вучахне пĕтерсе тĕнчери вӑрçа хӑвӑртрах вĕçлеме май пачĕ. Демократиллĕ çĕршывсенчи обществӑллӑ деятельсем çакна палӑртаççĕ: Япони империализмне аркатса тӑкас ĕçе Совет Союзĕ питĕ пысӑк вӑй хыврĕ. Америка радиообозревателĕ Карнан çапла каларĕ: «Совет Союзĕ Японие текех ура çине тӑрайми çапса ӳкерчĕ». Совет правительствин çак утӑмне Америка çарĕн Китайри сывлӑш-çар вӑйĕсен командующийĕ пулнӑ Ченолт генерал-майор питĕ пысӑка хурса хакланӑ. «Нью-Йорк таймс» хаçатӑн корреспондентне вӑл çапла каласа панӑ: «Совет Союзĕ Японие хирĕç вӑрçӑ пуçласа яни Лӑпкӑ океанри вӑрçа вĕçлес тĕлĕшпе татӑклӑ вырӑн йышӑнса тӑрать... Японие халĕ чĕркуççи çине лартнӑ».

Совет правительстви йышӑннӑ решение Япони хаçачĕсем те тĕплĕн сӳтсе яваççĕ. Ĕлĕкрех Япони хаçачĕсем, Германири Геббельс пропагандисчĕсем пекех, суйса мухтанма юрататчĕç. Халĕ вĕсем сасартӑках мухтанма чарӑнчĕç. Совет Союзĕ Японие хирĕç вӑрçӑ пуçлани çинчен пĕлтернĕ хыççӑн тепĕр кунах, Японин Домэй Цусин агентстви пĕлтернĕ тӑрӑх, Япони хаçачĕсем хӑйсен умстатьисенче: халĕ ĕнтĕ Хĕвелтухӑçĕнчи Азири вӑрçӑн чи хӑрушӑ тапхӑрĕ çывхарса килет, тесе асӑрхаттарчĕç. «Иомиури хоци» хаçатра çапла çырнӑ: «Лӑпкӑ океан çинчи вӑрçӑ çав тери ответлӑ тапхӑра пырса кĕчĕ. Халĕ ĕнтĕ пур ĕмĕтсене те сирсе пӑрахмалла. Халь иртнĕ событисене асӑнни нимĕне те пĕлтермест. Халĕ ĕнтĕ Японин çул юппине тухса тӑчĕ». Совет Союзĕ Японие хирĕç вӑрçӑ пуçласа яни Японин ют çĕршывсене тытса илес ĕмĕчĕсене тупӑка чиксе хунипе, вĕсен «Хĕвелтухӑçĕнчи аслӑ Азие»—Хĕвелтухӑçĕнче халӑхсен фашистла тĕрмине тӑвас шанчӑкĕсене пурне те аркатса тӑкнине Япони империалисчĕсем лайӑх ӑнланаççĕ.

Халĕ ĕнтĕ Япони агрессийĕн кунçулĕ вĕçленес вӑхӑт çитет. Япони хӑй пĕр сӑмахсӑр парӑнасси çинчен каласа парать, анчах та фашистла агрессорсене хирĕç вӑрçнин опычĕ демократиллĕ çĕршывсенчи халӑхсене сыхӑлӑхлӑ пулма вĕрентрĕ: агресси лагерĕ паракан сĕнӳсемпе сӑмахсене нихӑçан те ĕненме çук. Япони пĕр сӑмахсӑр парӑнмалли условисене йышӑнчĕ. Анчах та фашистла агрессорсем çав условисене çийĕнчех пурнӑçа кĕртсе пыма шутламаççĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вӑрçӑ фронтĕнче пулса иртнĕ ĕçсене пурте астӑваççĕ: кунта Германи парӑнасси пирки союзниксем кӑларса тӑратнӑ условисене «Дениц правительстви» официальнӑй йĕркепе йышӑннӑ хыççӑн та гитлеровецсем союзниксене хирĕç вӑрçма чарӑнман. Вара Хĕрлĕ Çар хӑвӑрттӑн пырса çапнине пула гитлерла вӑрӑ-хурахсен чӑннипе парӑнса хĕçпӑшала пама тивнĕ. Японецсен фашистланнӑ милитарисчĕсем те çакнашкал кашкӑрла йӑласемпех усӑ кураççĕ. Августӑн 11-мĕшĕнчех Макартур генерал Япони парӑнасси çинчен пĕлтернине çирĕплетсе каланӑ май, çапла асӑрхаттарнӑ: «Японецсем пĕр сӑмахсӑр парӑнма килĕшеççĕ пулсан та, вĕсене питех шанма çук». Макартур тата çакна астутарнӑ: «Япони хӑйĕн çав тери чееллĕхĕпе вӑрӑ-хурахлӑхне темиçе хутчен те кӑтартса пачĕ». Халĕ ĕнтĕ Япони империалисчĕсен ултавлӑхĕ татах та тепĕр хут палӑрчĕ. Япони хӑй пĕр сӑмахсӑр парӑнассине союзниксене каласа панӑ пулин те, унӑн çарĕ халĕ те союзниксене хирĕç тӑма пӑрахмасть-ха.

Союзлӑ державӑсен правительствисемпе халӑхĕсен тӑнманӑн формальнӑй заявленийĕсене, вĕсене Япони практикӑра тивĕçлипе çирĕплетсе кӑтартса памасть пулсан, шанмасӑр тӑма пур сӑлтавсем те пур. Хĕрлĕ Çарӑн генеральнӑй штабĕ Япони парӑнни çинчен ӑнлантарса панинче тӳррипех çапла каланӑ: Япони императорĕ хӑйĕн хĕçпӑшаллӑ вӑйĕсене çапӑçма чарӑнма приказ панӑ хыççӑн çав приказа чӑннипех пурнӑçа кĕртме тытӑнсан тин совет çарĕсем вӑрçма чарӑнĕç. Анчах та ку таранччен те Япони агрессорĕсем парӑнмарĕç-ха.

Япони императорĕ Хирохито Япони халӑхне чĕнсе калани те мире юратакан пур халӑхсене те сыхлӑхлӑ пулма хушать, мĕншĕн тесен Япони императорĕ Япони агрессине тӳрре кӑларма тӑрӑшать. Унӑн сӑмахĕ тӑрӑх, японецсем Япони хӑрушсӑрлӑхĕшĕн тата Хĕвелтухӑç Азире лӑпкӑ самана тӑвасшӑн вӑрçаççĕ пулать. Император рескрипчĕ çапла çирĕплетсе калать: Японин ют çĕршывсене тытса илес шухӑш пулман, вӑл «Азие ирĕке кӑларассишĕн» çеç тӑрӑшнӑ.

Çак заявлени тата официальнӑй ытти çынсем те çакнашкалах тухса калани Японири радио саракан станцин ют çĕршыв пайĕн руководительне Куссо Ояна çакӑн пек сӑмах тухса калама хавхалантарнӑ: «Вӑрçӑра пире çĕнтерни вӑл — вӑхӑтлӑх ӑнӑççӑрлӑх пулать, ку йӑнӑша Японин тӳрлетмелле».

Анчах та японецсем темĕнле тӑрӑшсан та, кирек епле пропаганда тусан та, империализмла Япони парӑннӑ факта текех улӑштарма пултараймаççĕ.

Японие çĕнтерни Пĕрлешнĕ Нацисен вӑй-хӑватне пĕтĕм тĕнчене кӑтартса пачĕ. Нимĕнле агрессиллĕ государство та унӑн вӑй-хӑватне хирĕç тӑма пултараймасть. Совет Союзĕ, хӑйĕн союзниксем умĕнчи обязательствисене тӳрĕ кӑмӑлпа пурнӑçа кĕртсе пырса, мире хӑвӑртлатас тесе тата халӑхсене малашне асапланассинчен, жертвӑсем тӑвассинчен хӑтарас тесе, Японие хирĕç вӑрçӑ пуçласа ячĕ. Çак аслӑ та ырӑ тĕллевсене пурнӑçа кĕртес тесе, гитлерла Германие хирĕç пынӑ вӑрçӑн тĕп йывӑрлӑхне тӳссе ирттернĕ совет халӑхĕсем, Инçетри Хĕвелтухӑçĕнче вӑрçӑн юлашки вучахне сӳнтерес тесе, каллех алла хĕçпӑшал тытрĕç. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат тивĕçлипех ĕнтĕ çапла калама пултарчĕ: «Кунран ырӑрах тĕллевсемшĕн пуçланнӑ вӑрçӑ питĕ сайра хутра пулать».

* * *

ССР Союзĕпе Польша Правительствисем Совет Союзĕпе Польша хушшинчи государство чикки çинчен тунӑ Договора тата Германи оккупацийĕ кӳнĕ сиенсемшĕн тӳлеттерес ыйтусем тĕлĕшпе тунӑ Килĕшĕве çак çĕршывсенче те тата урӑх çĕршывсенче те кӑмӑллӑн йышӑнчĕç. Çав документсем ĕнтĕ ССР Союзĕпе Польша хушшинчи çыхӑнусем туслӑн аталанса пынине татах та тепĕр хут кӑтартса параççĕ. Совет Союзĕпе Польша хушшинчи государство чикки çинчен тунӑ Договор Совет Союзĕнчи халӑхсемпе Польша халӑхĕсене хирĕçтерсе яма тӑрӑшакан реакциллĕ элементсен киревсĕр ĕçĕсене аркатса тӑкрĕ. Государство чиккин ыйтӑвне икĕ çĕршывӑн интересĕсемпе те килĕштерсе тивĕçлипе татса пани реакцин ĕмĕтсĕр шанчӑкĕсене салатса ярать, ССР Союзĕпе Польша малашне те туслӑн аталанса пымалли май пулса тӑрать.

Германи оккупацийĕ кӳнĕ тӑкаксемшĕн тӳлеттересси çинчен тунӑ Килĕшӳ Берлинри Конференци Германирен вӑрçӑ тӑкакĕсене шыраса илесси пирки йышӑннӑ решенирен тухса тӑрать. Çав решенисенче çапла каланӑччĕ: Польша шыракан тӑкаксене ССР Союзĕ хӑй шыраса илнĕ репараци шутĕнчен тӳлет. Çав решенисене пурнӑçа кĕртес тесе, Совет Союзĕ хӑй шыраса илнĕ репараци тӳлевĕсенчен Польшӑна тивĕçлĕ пай уйӑрса парать. Çак тӳлевсем укçан мар, тĕрлĕ таварсемпе пулнине палӑртмалла. Çапла вара Германи кӳнĕ сиенсемшĕн таварсемпе тӳлеттерес принцип çирĕпленсе пырать. Ыйтӑва çакӑн пек татса пани Версальри йӑнӑша текех тӑвассинчен сыхласа хӑварать. Ун чухне Германи репараци тӳлевĕсене укçан тӳлесе тĕрлĕрен махинацисем туса чӑннипех репараци тӳлевĕсене саплассинчен хӑтӑлса юлчĕ.

1945 çулхи августӑн 16-мĕшĕнче Мускавра тунӑ Договорпа Килĕшӳ ССР Союзĕпе Польша хушшинчи çыхӑнусем çирĕп никĕс çинче тӑнине кӑтартса пачĕç.

Л. МЕЛЬНИКОВ.

Ответлӑ редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатӑн — 4—23, пропаганда пайĕн — 2—83, парти пурнӑç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалӑх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00213 Типография №1, Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000